01 пĕлтерет, асăрхаттарать

Суйлав участокĕсем пирки

РФ Патшалăх Думин черетлĕ суйлавĕччен ăна хатĕрленес ĕçсем ячĕшĕн çеç пулмалла мар. Суйлава епле ирттернипе, çак кун хамăр сасăсене камсене панипе пирĕн пуласлăх тӳрремĕнех çыхăннă. Суйлава чрезвычайлă лару-тăрусăр ирттерме çак ответлă кун пушар хăрушлăхĕнчен катара тăтăр тесен пирĕн ăна паянах хатĕрленес пулать. Чи малтанах çакна палăртас килет: суйлав ирттерекен пӳлĕмсенчен пушар тухас пулсан эвакуаци çулĕсем уçă пулмалла, вĕсене тĕрĕс йĕркелемелле. Унта çынсене чăрмантаракан тĕрлĕ материалсемпе оборудовани пулмалла мар, çав çулсем çинче стенасене тата урайне хăвăрт çунакан материалсемпе çапасран асăрханмалла. Алăксем çинче электричествăпа çутăлакан "Выход" паллă тата тухмалли çулсем çинче эвакуаци паллисем пулмалла. Кашни объектрах курăмлă вырăнта пушар хăрушсăрлăх инструкцийĕсем тата эвакуаци планĕсем кирлĕ.

Суйлав участокĕсем – халăх массăллă пухăнакан вырăн. Çавăнпа та унта пушар хăрушсăрлăхĕ чи çӳллĕ шайра пултăр тесе тăрăшмалла. Çакна валли суйлав комиссийĕсен ертӳçисен пушар хăрушсăрлăхĕпе инструктаж тухмалла. Суйлав пӳлĕмĕсене пушар сӳнтермелли пирвайхи хатĕрсемпе туллин тивĕçтермелле, йывăç конструкцисене çулăма вăй илтереймен шĕвекпе пĕрĕхсе тухмалла, электрооборудованисемпе электропроводасен юсавлăхне тĕрĕслемелле, пушар сигнализацийĕ ĕçе юрăхлă пулмалла.

Пушар сигнализацийĕ тенĕрен. Ноябрĕн 4-мĕшĕнче 13 сехет те 30 минутра Тула облаçĕнчи ватă çынсемпе инвалидсен çуртĕнче тухнă пушарта сигнализаци пулманранах инкек пирки вăхăтра пĕлейменни куç умне пулчĕ. Унта ĕçленĕ медперсонал пушара малтанхи вăхăтра хăйсен вăйĕпех сӳнтерме тăрăшнăран тата çавна пула çулăм хăвăрт аталанса вăй илнĕрен "хĕрлĕ автан" тыткăнĕнче 32 çын пурнăçĕ татăлни пушар хăрушсăрлăх правилисене пăхăннă чух сигнализаци пирки те манас çуккине çирĕплетет.

Çывхаракан суйлавра районта ĕçлекен 51 суйлав участокĕнчен пĕр пайне тĕрĕслерĕмĕр те ĕнтĕ. Рыккакассинчи, Мăн Шашкарти, Çуткӳлту суйлав вырăнĕсенче – ял клубĕсенче – хăрушсăрлăх ыйтăвĕсем кун йĕркинчен тухман-ха. Тĕрĕслевсем малалла пыраççĕ.

Район территорийĕнче паянхи куна 48 пушар пулчĕ. Ирĕке кайнă çулăм 9 çын пурнăçне татрĕ, 3 çын пиçсе кайрĕ, миллионшар тенкĕлĕх пурлăх кĕлленчĕ. Каламалла, чылай чух инкек виçи пушар пирки çийĕнчех пĕлтерменрен ӳссе каять. Паян кашни килте-хваттертех мобильлĕ телефонсем пур. Суйлав çывхарнă май паян эпир вĕсемпе пушар инкекĕ пирки вăхăтра шăнкăравласа пĕлтерме пултарни пирки аса илтеретпĕр. Раççей Федерацийĕн Чрезвычайлă лару-тăру министерствин Чăваш Республикинчи Тĕп управленийĕ "Пĕрлехи дежурнăйпа диспетчер службине" Чăваш Республикинче ĕçлекен пур çыхăну операторĕсенчен те шăнкăравсем тӳлевсĕр пулнине пĕлтерет. Номерĕсем вара çакăн пек:

– Билайн – 01 е 010;
– Мегафон – 010101;
– МТС – 01, 010 е телефон модельне кура 001;
– Чувашия Мобайл – 010 е 8 (241)-(2-17-34);
– Смартс – 01 е 8 (241) 01-111;
– Стационарлă телефонсенчен шăнкăравлама – 01.

Тавлашуллă ыйтусем çуралсан эсир тӳрремĕнех РФ Чрезвычайлă лару-тăру министерствин Чăваш Республикинчи Тĕп управленийĕпе 8-22-39-99-99 телефонпа е Атăлпа Урал тăрăхĕнчи патшалăх пушар надзорĕн управленийĕпе (Екатеринбург хули) 8-343-216-33-54 телефонпа çыхăнма пултаратăр.

Çак телефонсемпе шăнкăравламалла ан пултăр тесен, граждансен те, ответлă çынсен те суйлава хатĕрленнĕ чух тата суйлав вăхăтĕнче пушар хăрушсăрлăх правилисене çирĕп пăхăнмалла. Лăпкă та ăнăçлă иртнĕ суйлав кăна пире çĕнĕ аталану çулĕ çине тăратĕ. Ана пурнăçа кĕртме вара пирĕн пурте пур. Çакна шута хурса суйлава хатĕрленер, декабрĕн 2-мĕшĕнче пĕр саслă пулса суйлав участокĕсене çитер, хамăрăн аталану çулне хамăр алăпа уçар!

И. СМИРНОВ, патшалăх пушар надзорĕн районти уйрăмĕн ертӳçи.

Декабрĕн 2-мĕшĕ – РФ Патшалăх Думин суйлавĕ

Аграрисем хăйсене илтессе шанаççĕ

(Вĕçĕ. Пуçл. 1-мĕш стр.).

Раштав уйăхĕнче иртмелли суйлав хăйĕн çинчен ытларах та ытларах калаçтарать. Телекурав экранĕсенче халăх телейĕшĕн "хыпкаланакан" политиксен тавлашăвĕ самантлăха та лăпланмасть. Халăха (вула: суйлавçăна) вара аякран сăнаса тăракан электорат вырăнĕнче анчах кураççĕ. Чăннипе, пур çĕрте те çак "шăпапа" килĕшмеççĕ.

Шупашкар районĕ чи малтанах аталаннă ял хуçалăх производствипе палăрнă. Кам пĕлмест-ши "Чăваш бройлерĕ" АУО е "Ольдеевская" агрофирма" АХО продукцине? Районăн аграри секторĕ ăнăçлă аталанса пырать. Унăн малашнехи шăпи ял çыннине пăшăрхантармасăр тăма пултараймасть. Ялта пурăнакан чылай çын хăш парти мĕне тăнине тахçанах ăнланса илнĕ. Çавăнпа та малашнехи пурнăç мĕнле пуласси ытларах хăйĕнчен килнине те пĕлет вăл. Çавăнпа та районта Владимир Путин Президентăн çул-йĕрне малалла тăсас енĕпе пуçару ушкăнне йĕркеленĕ.

Ик çĕр ытла çын пухăннă çак кунсенче "Чăваш бройлерĕ" АУОн ларусем ирттермелли залне çĕршывра тытса пыракан политика çинчен хăйсен шухăшне пĕлтерме. Сăмах илнисем юлашки вăхăтра Раççейре те, Чăваш Енре те ырă улшăну чылай пулнине асăрхамасăр тăма çукки çинчен каланă, Чăваш ялĕнче пурăнакансен киллĕсене çитнĕ çут çанталăк газĕ пурнăç условийĕсене палăрмаллах лайăхлатнă. Ялсенче шыв пăрăхĕсем хываççĕ, асфальт сарнă çулсем тăваççĕ, тĕслĕх вулавăшсем ĕçлеççĕ. Мăн Пӳкасси ялĕнчи Культура çуртĕнче 13 çул библиотекарьте ĕçлекен Елена Пихторинскаяшăн ку тема уйрăмах çывăх. "Пирĕн библиотека чăннипех те 21-мĕш ĕмĕрти вулавăш", – тет хăйĕн ĕçне чунран парăннăскер.

"Тĕслĕх библиотекăсем уçасси ăнăçлă программа пулнине пурнăç хăй çирĕплетрĕ", – палăртать Елена. Çав вăхăтрах пысăк шанăçпа ялти клубсен тĕлĕшпе те çавăн евĕрлĕ Указ йышăнасса кĕтни çинчен пĕлтерчĕ. "ЧР Президенчĕ Указ кăларма хатĕрленет тенине илтрĕм". – "Тĕрĕс. Çакă вăл – ял чĕрĕлсе аталанни. Калаçнипе кăна мар, ĕçпе çирĕплетни. Хăш-пĕр политик суйлав тапхăрĕнче кăна пирĕн культура шайне концерт-дискотекăсемпе "ӳстерет".

Пачах çĕнĕ инфратытăм йĕркеленни – республикăн агропромышленноç аталанăвне хывнă çирĕп никĕс. Пирĕн аграрисем тинех патшалăх пулăшăвне туйса илчĕç. Çакна "АПК аталанăвĕ" наци проекчĕ Чăваш Енре ăнăçлă пурнăçланни аван çирĕплетет. "Енчен те патшалăх пулăшу кӳмен пулсан нивушлĕ хамăн хуçалăха çапла аталантарма пултарăттăм-ши эпĕ?" – ыйтать Мошкасси ялĕнчи Галина Зубкова фермер. Пĕлтĕр вăл сысна чылай туяннă, вĕсем валли хуралтăсем çĕкленĕ, халĕ сурăх ĕрчетме хатĕрленет. Хăйĕн ыйтăвне хăех хуравлать ĕçчен хĕрарăм: "Енчен наци проекчĕ пулман пулсан пире никам та çăмăллăх кредит памастчĕ. Укçа-тенкĕсĕр, паллă ĕнтĕ, аталанма хĕн".

Елена Пихторинская библиотекарь тата Галина Зубкова фермер та парти ретĕнче тăмаççĕ. Çапах та суйлав пĕтĕмлетĕвĕ вĕсене те хумхантарать. "Чăваш бройлерĕ" АУО директорне Вадим Николаева та. "Вунă çул каялла кăна эпир йывăр лару-тăруран çухатусемсĕр тухасси пирки шухăшланă. Халĕ çĕнĕ çитĕнӳсем тума ĕмĕтленетпĕр, тулли хăватпа ĕçлетпĕр", – тет Вадим Иванович. Хăй каланине цифрăсемпе çирĕплетет: 90-мĕш çулсенче Кӳкеçри чăх-чĕп фабрики (каярахпа унăн никĕсĕ çинче "Чăваш бройлерĕ" АУО йĕркеленнĕ) çулталăкра 3900 тонна аш-какай хатĕрленĕ. Предприятин хальхи кăтартăвĕ шăпах икĕ хут пысăкрах. "АПК аталанăвĕ" наци проекчĕпе килĕшӳллĕн "Чăван бройлерĕнче" реконструкци пулнă, Италире туса кăларнă газпа хутса ăшăтмалли автономиллĕ ĕçлекен оборудовани вырнаçтарнă. "Ырринчен ыррине кĕтмеççĕ. Эпĕ Владимир Путинпа Николай Федоров ĕç-хĕлне ырлатăп, çак çул-йĕре малашне те тытса пымалла. Енчен те эпĕ вĕсен политикипе килĕшетĕп пулсан, мĕншĕн-ха вĕсенчен уйрăлса кайса уйрăммăн ĕçлемелле?" – терĕ вăл РФ Патшалăх Думине суйлама тăратнă кандидатурине сирсе.

Пуçару ушкăнĕ хăйĕн пухăвĕнче республикăра пурăнакансене Чĕнсе каланине йышăнчĕ. Чĕнӳ раштав иккĕмĕшĕнчи суйлавра мĕнле витĕм кӳресси пирки каламăпăр. Анчах Шупашкар районĕнче пурăнакансем вăл ырă пуласса питĕ шанаççĕ.

А. ВАСИЛЬЕВ.

Сăмах – район администрацийĕн ĕçченне

Малашне те пĕрлех лайăхлатасчĕ хамăр пурнăçа

(Вĕçĕ. Пуçл. 1-мĕш стр.).

– Сирĕн шухăша малалла тăсса çакна та палăртас килет. Паян çĕршыв та, республикă та çамрăк çемьесенĕ, ялта пурăнакан, ĕçлекен специалистсене çурт-йĕр çаварма та пулăшать. Ĕмĕрпĕне çиес килнине çимесĕр - ĕçмесĕр, тăхăнас килнине тăхăнмасăр укçа пуçтармалла мар паян.

– Паян районти халăха çурт-йĕрпе тивĕçтерессипе тĕрлĕрен программăна пурнăçлатпăр. Нумай çуллăха 6 процентпа паракан ипотека кредичĕ, сăмахран, пысăках мар тупăшлă çемьесемшĕн меллĕ. Ăна 15 çуллăха параççĕ. Кăçал çурт-йĕр условийĕсене лайăхлатма черетре тăракансенчен 4 çемьене асăннă ипотека кредитне 1296 пин тенкĕлĕх панă. Кунсăр пуçне тата тепĕр çемье çак ипотека кредичĕпе Москакассинчи нумай хваттерлĕ çуртра хваттер илме хатĕрленет.

2002-2010 çулсене валли йышăннă "Çурт-йĕр" программăпа килĕшӳллĕн çамрăк çемьесене çурт-йĕр туянма е тума унăн хакĕн 40 проценчĕ чухлĕ патшалăх пулăшăвне паратпăр. Асăннă программăн "Çамрăк çемьесене çурт-йĕрпе тивĕçтересси" подпрограммипе килĕшӳллĕн çак пулăшăва илме 2006 çулта 6 çемье кĕнĕччĕ списока. Çакна валли уйăрнă укçа-тенкĕ района кăçалхи январь уйăхĕнче килнĕрен вĕсен ыйтăвне кăçал тивĕçтертĕмĕр:1433,835 пин тенкĕлĕх. Çавăнпа пĕрлех тепĕр 4 çемьене ача çуралсан паракан хушма субсидие 111,150 пин тенкĕлĕх патăмăр. Укçа-тенкĕ юлнăран тата тепĕр çамрăк çемьене 181,545 пин тенкĕлĕх пулăшу патăмăр.

Кăçалхи май-сентябрь уйăхĕсенче Перекет банкĕн Муркашри уйрăмне тепĕр 7 çемьене кредит илме ятăмăр. Вĕсенчен 5-шĕ 2673,19 пин тенкĕлĕх илчĕ патшалăх пулăшăвне. Тепĕр иккĕшĕ тӳлеме пултарайманнипе ăна илеймерĕç.

Асăннă патшалăх пулăшăвне кăçал илмелли çамрăк çемьесен списокĕнче пурĕ 11 çемье. Ноябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне вĕсенчен 5-шĕ 1848 пин тенкĕлĕх субсиди илме май паракан свидетельствăсене илчĕç. Август уйăхĕнче вара "Çамрăк çемьесене çурт-йĕрпе тивĕçтересси" подпрограммăпа килĕшӳллĕн патшалăх пулăшăвне 2008 çулта илекенсен списокне хатĕрлерĕмĕр. Унта пурĕ 23 çамрăк çемье кĕчĕ.

Тепĕр "Яла 2010 çулччен социаллă аталантарасси" программăпа вара пирĕн района ялта пурăнакансене çурт тума 1230 пин, çамрăк çемьесемпе çамрăк специалистсене валли 1600 пин тенкĕ уйăрнă. Кăçалхи ноябрь уйăхĕ тĕлне ялта пурăнакан 5 гражданин 30 процентлă субсиди илчĕ. Тепĕр 3 çамрăк çемьепе çамрăк специалистсем 616, 890 пин тенкĕлĕх субсиди валли свидетельство илчĕç, тепĕр 4 çамрăк çемьепе çамрăк специалиста 70 процентлă (30 процент – федераллă бюджетран, 40 процент – вырăнти бюджетран) субсиди илме министерствăна тăратнă.

Иртнĕ çулта вара пĕрмаях ялта пурăнакан 30 çултан иртнĕ граждансем пурĕ Федераллă бюджетран 901,3 пин, çамрăк специалистсемпе çамрăк çемьесем 2045, 610 пин тенкĕ чухлĕ пулăшу илнĕ.

Тата çакна та каласа хăвармалла. Ял тăрăхĕсене 3190 пин тенкĕ укçа уйăрнă. Çак суммăн пĕр пайĕ "Çамрăк çемьесене çурт-йĕрпе тивĕçтересси" подпрограммăпа килĕшӳллĕн çамрăк çемьесене пулăшма каять, тепĕр пайĕ – "2010 çулччен ялсене социаллă аталантарасси" программăпа килĕшӳллĕн çамрăк специалистсене çурт-йĕрлĕ пулма пулăшма. Асăннă суммăн юлашки пайĕ вара ял тăрăхĕсенче çурт-йĕр условийĕсене лайăхлатма черетре тăракансен хушшинче валеçĕнет. Иртнĕ çул çак тĕллевпе районти ял тăрăхĕсене 2944, 7 пин тенкĕ уйăнăччĕ. Çак укçа-тенкĕпе 29 çемье хăйсен çурт-йĕр условийĕсене лайăхлатнă.

Кунта манăн çак самант çинче те чарăнса тăрас килет. 2005 çулта ун чухне вăйра пулнă "Çамрăк çемье" программăпа килĕшӳллĕн 16 çемье 15 процентлă субсидие илмеллеччĕ. Лимит пĕтнĕ пирки вăхăтра илеймерĕç вĕсем çак пулăшăва. Халĕ вара вĕсем валли те ырă çитрĕ. Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн юлашки ларăвĕнче çакна валли укçа-тенкĕ уйăрма йышăннă. Апла пулсан, вăл вăхăтра çав программăпа черетре тăнă çемьесен те пăшăрханма кирлĕ мар: çулталăк вĕçленичченçав пулăшăва илес шанчăк пур.

Çурт-йĕр тенĕрен, кăçал Муркашра 40 хваттерлĕ çурт хута кайрĕ. Халĕ Москакассинче çулталăк вĕçленичченçав 36 хваттерлĕ çуртăн пĕр подъездне хута ярассипе ĕçлеççĕ. Çав подъездри 4 хваттерне илме çеç хальлĕхе килĕшӳсем пур. Çавăнпа та кăмăл пуррисем çӳлерех асăннă программăсемпе хваттер илме пултараççĕ. Аса илтеретĕп, "Çурт-йĕр" программăпа килĕшӳллĕн çамрăк çемьесене 40 процентлă, "2010 çулччен яла социаллă аталантарасси" программăпа килĕшӳллĕн ял хуçалăхĕнче, бюджет сферинче ĕçлекен çамрăк специалистсене 70 процент таран субсиди параççĕ çурт-йĕрлĕ пулма.

Пĕтĕмпе вара кăçал уйрăм çуртсене (58 çурт) тата хушма хуралтăсене ялсенче 19800 тăваткал метрлăх тунă.

– Район центрĕнче нумай çул пушшăн ларнă çурт та кăçал кĕске хушăрах çĕнĕ тум тăхăнма пуçларĕ. Районта пурăнакансем кунта физкультурăпа спорт комплексĕ пулни пирки пĕлеççĕ, кĕтеççĕ. Тĕплĕнрех каласа парсамăрччĕ çак çурт пуласлăхĕ пирки.

– Асăннă комплексăн пĕрремĕш хутĕнче вестибюль, фойе пулать. Кунтах 25мх8,5 м калăпăшлă бассейнра кунне 96 çын канăва усăллă ирттерме пултарать. Боксер залĕ те сменăра 20 çынна йышăнать. Пĕрремĕш хутрах гардеробнăй, душевой, санузел, медсестра пӳлĕмĕ, инвентарь хумалли пӳлĕм пулать. Çавăн пекех – спортзал. Вăл сменăра 48 çынна йышăнĕ.

Иккĕмĕш хутра вара кĕрешӳ, тренажер залĕсем, хор класĕ, музыкăпа художество класĕсем, хореографи залĕ пулĕ. Иккĕмĕш хутрах Культура керменĕн администрацийĕ, çавăн пекех санузелсем, венткамера, ытти хушма пӳлĕмсем пулĕç.

Шал енчен çеç мар, тул енчен те палăрмаллах улшăнĕ физкультурăпа спорт комплексĕ ларакан вырăн. Çурт хыçĕнче пĕве пулĕ. Фонтан та ĕçлĕ. Кунтах волейбол, баскетбол площадкисем, теннисла, мини-футболла вылямалли вырăнсем пулĕç. Çăмăл атлетикăна кăмăллакансем вара чупма е утма уйăрнă вырăнта ирттерĕç вăхăта. Пĕтĕмлетсе каласан, шалтан çеç мар, тултан та канмалли вырăн пулĕ кунта. Йĕри-тавра йывăçсем, чечексем лартма палăртнă. Çак илĕртӳллĕ вырăнта лармалли саксем вырнаçтарĕç.

– Владимир Германович, Муркаш тăрăхĕ илемлĕ пулнинчен эпĕ паян тĕлĕнме пăрахмастăп. Халь Эсир каласа панинчен вара район центрĕнчи çак вырăн чи илĕртӳллисенчен те илĕртӳлли пуласси паллă. Проблемăсем те кунта килсен вăхăтлăха манăçĕç. Унччен вара вĕсене татса памалли çул-йĕр çинче чарăнар-ха. Пирĕн районта шыв ыйтăвĕ кун йĕркинчен каймасть. Ку енĕпе паян мĕнле ĕçсем пыраççĕ районта?

– Шыв ыйтăвĕ пĕрлешӳллĕ хуçалăхсем пĕтнĕ çĕрте тухма пуçларĕç. Пĕлтĕр Юнкă, Катькас, Мăн Хураçка тăрăхĕсенче пулчĕ ку йывăрлăх. Халĕ унти шыв башнисене ял тăрăхĕсем хăйсен балансĕ çине куçарса, вĕсене Мăн Сĕнтĕрти пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăха пăхса тăма пачĕç ятарлă килĕшӳпе. Кăçал вара Шетмĕпуç, Турай ял тăрăхĕсенче палăрма пуçларĕ ку ыйту. Çавăнпа та асăннă ял тăрăхĕсен шыв башнисене хăйсен балансĕ çине илмелле, пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăхпа ăна пăхса тăма килĕшӳ тумалла. Çакă ку ыйтăва татса памалли чи усăллă та вырăнлă меслет.

Кунта çакна та палăртас килет. Шыв тӳлевсĕр мар, мĕншĕн тесен сквважинăна тытса тăма, лицензи илме те сахал мар укçа тухса каять, çакă йăлтах хăйхаклăх çине кайса ларать. Требованисем те çирĕп. Пĕр кубла метр шыв паян халăха 6 тенкĕ те 16 пуса ларать. Çавăнпа та ялта пурăнакансем хаклăрах теççĕ пулсан, çăлсене тытса тăрса сыхласа хăварассипе те тимлемелле. Шыв башнисене паян хăйсем тытса тăракан ял хуçалăх предприятийĕсен вара çакна валли лицензи илмелле.

Паян уйрăмах суйлав умĕн пыл та çу пурнăç тума шантаракансем те – никам та тӳлевсĕр шыв туса памасть. Хамăртанах нумай килет. Ял хуçалăх предприятийĕсен (вĕсем çинче пулсан шыв башнисем) хамăр суйланă ертӳçĕсемпе ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсемпе пĕрле тăрăшни, пĕрпĕрне ăнланни кирлĕ.

– Çĕнĕ урамсене электрификацилесси пирки мĕн палăртнă пулăттăр?

– Ку тĕлĕшпе те проблема пурри вăрттăнлăх мар. 2000-2002 çулсенче урамсене электрификацилес программа ĕçлесе илчĕ. Çав хушăра 22 çухрăм ытла тăршшĕ электричество линине кĕртме ĕлкĕртĕмĕр урамсене. Çĕнĕ требованисем тухрĕç каярахпа. Унпа килĕшӳллĕн урамсенчи электропралуксем изоляциленнисем пулмалла. Ку вара хак çине те пырса çапрĕ. Программа ĕçлеме пăрахрĕ. Паян çулталăкне 1-2 урама кĕртетпĕр-ха электричество линине. Анчах ку сахал. Çитес çул валли ку ĕçе 9 урама туса ирттерме проектсем хатĕр. Вĕсем экспертиза витĕр тухнă. Пĕтĕмпе çитес çул 8 çухрăм тăршшĕ кĕртмелле электролиние çĕнĕ урамсене. Кун пек урамсем вара районта тата 43. Çавăнпа та халăхăн ыйтăвне тивĕçтерессине хăвăртлатас тесе ку тĕлĕшпе Промышленноçпа энергетика министерствине тухрăмăр.

– Юлашки вăхăтра çӳп-çап тăкмалли вырăн та часах тулса тăнипе ыйтусем çуралаççĕ.

– Ку проблема, тĕпрен илсен, икĕ çăлтавран пуçланчĕ. Халĕ килсенче çут çанталăк газĕ çуннипе ăпăр-тапăра вучахра çунтарма пăрахрăмăр пулас. Тепĕр енчен магазинсенчи ĕçмелли шĕвексене пластик савăтра сутни те çакăн патне илсе пырать: йăлтах çӳп-çаппа ăна тăкмалли вырăна тухать. Паянхи куна илсен, Мăн Сĕнтĕрти çакна валли уйăрнă полигон тулса пырать. Çавăнпа та çӳп-çап тăкмалли тепĕр вырăн валли проект хатĕрлерĕмĕр. Вăл экспертизăра. Çитес çул Ивановка патĕнчи телевышка хыçĕнче тума палăртнă çак çĕнĕ вырăна. Районти ялсем çине-çинерех вырнаçнă пирки çакна валли вырăн тупма çăмăлах пулмарĕ. Требованисемпе килĕшӳллĕн çӳп-çап тăкмалли вырăн халăх пурăнакан вырăнтан 300 метр аяккарах пулмалла пулсан, эпир суйланă вырăн – 1 çухрăм инçĕшĕнче. Экологи енчен те требованисемпе килĕшӳллĕн пулĕ йăлтах. Тепĕр хут калатăп, йăлтах тивĕçлĕ нормăсемпе килĕшӳллĕн йĕркелетпĕр ку ĕçе.

– Владимир Германович, сăмахăмăр вĕçленсе пынă май Сире калаçушăн тав тăватăп. Тен, мĕн те пулин хушса каламалли пур?

– Пурнăç вăл татса памалли ыйтусенчен тăрать. Вĕсенчен чылайăшне татса патăмăр. Республика, çĕршыв Правительствисем пулăшнипе, пĕр-пĕрне ăнланнипе. Халиччен тунă курăмлă ĕçсемпе пĕрлех пирĕн татса памалли ыйтусем те пурри паянхи калаçуран та курăнчĕ. Вĕсене татса парассипе ĕçлетпĕр те паян. Эппин, малашне те пĕрлех çак çулпа пĕр-пĕрне ăнланса утасчĕ, пĕрле лайăхлатасчĕ хамăрăн пурнăçа.

Л. ПАВЛОВА калаçнă.